**Чĕлĕм**

(Чĕлĕмçĕ юрри)

Тĕтĕм ашшĕ,
Ырă чĕлĕм,
Мухтав сана,
Кукăр пуç.

Тутан ашĕ,
Çăвар тути,
Чĕрен çăвĕ,
Тавтапуç!

Тутлă апат
Çинĕ хыççăн
Эпир сана
Тытатпăр.

Санăн кĕлне
Шакка-шакка
Хатĕрленсе
Тăратпăр.

Сан илемлĕ
Сăнна пăхса
Тасалăхна
Сăнатпăр.

Çутă сăнлă
Шлепку айне

Ырă табак
Хуратпăр.

Чунтан-вартан,
Пур кăмăлтан
Сана савса
Чĕртетпĕр.

Куç хупахне
Усăнтарса,
Тута тăсса
Ĕметпĕр.
Тутапа та,
Сăмсапа та
Çынсем çине
Вĕретпĕр.

Пиртен тухнă
Сарă тĕтĕм
Ункăн-ункăн
Çаврăнать.

Çынсен ăшне
Кĕре-кĕре
Чыхăнтарма
Тытăнать:

Çапла пирĕн
Кукăр карчăк
Эпир пурне

Палăртать.

Тута хырăм
Çинчен туртса
Кăмăлсене
Тултарать.

Чĕлĕм, эсĕ
Тĕслĕренех,
Санăн ят та
Хисепсĕр.

Тĕнче сана
Туман пулсан
Эпир хальччен
Пĕтетпĕр:

Шухăшлă çын
Çăварĕнче
Ăсĕнчен те
Пахарах,
Хуйхăллисен
Тутисенче
Хуйхинчен те
Маларах.

Хăш чух санран
Вут-хĕм тухса
Ялĕпеле
Çунаççĕ,

Хуйхă тесе
Çынсем вара
Каллех сана
Тытаççĕ:

Чĕлĕм лайăх,
Табак хаяр -
Туртас тесе
Пуплеççĕ.
Пуçа чиксех
Тутисемпе
Пăккин-паккин
Ĕмеççĕ.
Эпĕ халĕ
Юрланине
Çынсем вара
Юрлаççĕ.
Эй, чĕлĕмĕм,
Ĕмĕр сыв пул,
Сана пурте
Мухтаççĕ.

*1910*

*Шупуççынни, Н. Чĕлĕм : [чĕлĕмçĕ юрри] / Н. Шупуççынни // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 79-80.*